

# МĂН КУН УЯВĔ

ТИХОНОВА Индира Владимировна,
Патăрьел районĕнчи
Пăлапуç Пашьелти
пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам
шкулта вĕрентекен

Тĕллевсем: 1) ачасене чăваш халăх йăли-йĕркипе интереслентересси, Мăн куна епле хатĕрленнипе паллаштарасси; 2) Мăн кун сăвви-такмакĕсемпе, вăййи-куллипе киленесси; 3) ачасемпе çамрăксем тата аслă ăрури çынсем хушшинчи çыхăну çирĕп пулнине туйтарасси.

Кирлĕ хатĕрсем: илемлĕ çăмартасен выставки, магнитофон, шарсем, ИКТ.

Ертӳçĕ. Çурхи чи паллă уявсенчен пĕри — Мăн кун — Аслă кун. Вăл пĕр эрне хушши тăсăлать. Çак кун мĕн ĕлĕкрен тутлă апат-çимĕç пĕçернĕ, сăра сĕрнĕ, çăмарта хĕретнĕ. Аслисем хăйсен тăванĕсемпе, ратнисемпе килрен киле çӳренĕ, рет тунă. Пурин патĕнче те хăналаннă, юрласа-ташласа савăннă. Мăн кунăн пĕрремĕш кунне, ирхине, ачасемпе ваттисем хĕвеле курма тухнă та çапла каланă:

Хĕвел эсĕ, сар хĕвелĕм,
Пăхсам эс чӳречерен.
Хĕвел эсĕ, сар хĕвелĕм,
Шуса тух та чиперлен!

Хĕвел аванрах курăнтăр тесе тĕрлĕ хуралтă тăррине хăпарса пăхнă. Мăн кун эрнипех тутлă апат-çимĕçпе, вăййă-кулăпа савăннă — ачи-пăчи те, ватти-вĕтти те.

Ачасем, эпĕ сирĕн çине пăхатăп та хăшĕ-пĕри анасласа ларнăн туйăнать. Çуркунне кăшт чĕрĕлме сире тупмалли юмахсем парам-ха.

Мультимедиапроектор урлă экран çине тупмалли юмахсем тухаççĕ.

1. Çиелте пăр, аялта пăр, варринче вара — пыл. *(Çăмарта)*

2. Çĕнĕ пӳртре такам пур, тухнă чух пӳрчĕ ишĕлсе анать. *(Çăмартаран чĕп тухни)*

3. Шурă чиркӳ, ниçтан кĕме алăк çук. *(Çăмарта)*

Ачасем, эсир асăрхарăр пулĕ ĕнтĕ, тупсăмсем пурин те пĕр япала — çăмарта. Çапла вара, Мăн кунăн тутлă апачĕ вăл илемлĕ

те техěмлě çăмарта. Çынсем çак кун пěр-пěрне «Христос чěрěлнě!», «Чăн чěрěлнě!» тесе саламлаççě, виçě хут чуп тăваççě те Мăн кун çăмарти параççě. Хěрлě çăмарта — чěрěлěх символě. Хěрлě тěс — савăнăç палли, этемлěх чěрěлнине пěлтерет. Çавăн пекех Иисус Христос юнěн тěсě те теççě.

1-мěш ача.

Эпě шурă çăмарта
Питě юрататăп.
Чăх çăмарта тăвасса
Сыхласа тăратăп.

2-мěш ача.

Илтěм икě çăмарта,
Ятăм сахăр та хăйма.
Пулчě питě тутлă торт,
Атте калать: «Высший сорт!»

3-мěш ача.

Суханпа çăмартаран
Юрататăп эп салат.
Çук тутли çак апатран,
Ăна тума пит ансат.

4-мěш ача.

Анне сухан шуратать,
Хуппине вăл пуçтарать.
Мăн кун валли çăмарта
Унпала вăл саратать.

Ваттисен йăлипеле
Хěрлě çăмарта тытса,
Çăт! та çат! ăна çапса
Пěрин паттăр пулмалла.

Ертÿçě. Мăн кунта çăмартаран тěрлě апат пěсерме пулать. Кашни хăй мěн пěсернине каласа пачě.

Мăн кунта çакăн пек йăла та пулнă: ачасем çăмартана хире-хирěç çаптарнă. Хăшěн çěмěрěлмест, çав нумайрах пурăнать иккен. Ну, камăн вăй виçес кăмăл пур? Ан шикленěр, ачасем: тен сирěнтен пěри 105 çул пурăнě, тепри вара — 106.

Алăка шаккаса автан кěрет.

Автан. Сывă-и, тусăмсем! Çурхи салама йышăнса илсемěр манран. Ман чăхсем çав тери нумай çăмарта тунă. «Мăн кун çитет, кайса пар-ха ачасене», — терěç вěсем. Çавăнпа килтěм паян сирěн пата! ***(Карçинкkине лартать.)*** Манăн сирěн тавçăрулăха тěрěслесе пăхас кăмăл пур. Калăр-ха мана:

— Камăн чăххи сар çăмарта тунă тет? Тĕрĕс, Сармантейĕн.

— Юмахри Кащейăн вилĕмĕ ăçта пытаннă тет? Çапла, асамлă çăмартара.

— Вырăс халăхĕн юмахĕнчи ылтăн çăмарта туса панă чăх ячĕ мĕнлеччĕ-ха? Тĕрĕс. Ряба пулнă вăл. *(Автан ачасене илемлĕ çăмарта парса тухать.)*

Ертӳçĕ. Ачасем, автан мĕнле илемлĕ тум тăхăннă. Ĕлĕк ачасене тата мĕнле çи-пуç тăхăнтартнă-ши?

1-мĕш ача.

Мăн кун ячĕпе тесе
Парнелерĕ асанне.
Ик кĕсьеллĕ пит хитре
Мăкăнь çеçкиллĕ кĕпе.

2-мĕш ача.

Марук çĕнĕ саппунпа,
Сарпи хитре кĕпепе,
Элпи пурçăн тутăрпа
Вăйă выляç улăхра.

3-мĕш ача.

Чăваш ачи чăвашах,
Тымар янă авалах.
Асаттесен йăлине
Асра тытăр яланах.

Ертӳçĕ. Мăн кунта пурне те чан çапма юранă (ар çынсене, арçын ачасене). Çавăнпа çынсен хавас кăмăлне татах та çĕклесе кунĕпех чан сасси янăранă. Тата мĕн чухлĕ вăйă выляна!

«Çăмарта парне шырать» вăйă. Сĕтел хĕррипе канфет, пĕремĕк, шăхличĕ, теттесем лартса тухмалла. Çăмартана кустарса ярсан хăшне хускатать, çавă хăйĕн пулать.

Ертӳçĕ. Мăн кун валли тутлă куличсем пĕçернĕ. Пирĕн пĕчĕк хĕр ачасем амăшĕсемпе çак тутлă çăкăрпа пире хăналасшăн. Ырă сунса пурне те сĕтел хушшине чĕнетпĕр.

Чей ĕçеççĕ.

Ертӳçĕ. Ĕлĕкрен те ĕлĕкхи ырă йăласенчен пĕри — Мăн кун ячĕпе кайăка ирĕке вĕçтерсе ярасси.

Ют çĕрте те пăхăнатпăр
Аслисен йăлисене.
Кайăк вĕçтерсе ятпăр
Çутă Мăн кун ячĕпе.